21-43

Раҫҫей Хветератсийӗн Сотсиалисӑмпа Канаш респупликки.

Пӗтӗм тӗнҫери пролеттарисем, пӗрлешӗр.

*Л. Н. Толстой.*

# Ерех тума пуҫлакан, 6 пайлӑ пйессӑ.

(Первый винокур, пьеса в 6-ти действиях).

На чувашском языке

ТӖП ЧӐВАШ ПАЙӖ КӐЛАРНӐ.

Издательство Центрального Чувашского Отдела при Народном Комиссариате по национальным делам.

Хусан 1921 ҫул.

Р. В. Ц. Казань. Печат. разреш. № 237 6000 экз.

Казань 1-я Государственная Типография 1921 года.

Ерех тума пуçлакан, Л. Н. Толстой çырнă ултă пайлă пиессă

Выђакансем:

Çĕр ĕçлекен.

Шуйттан çури, çĕр ĕçлекенсене çавăракан, тарçă.

Вĕçкĕн шуйттан.

Шуйттансен пуçлăхĕ.

Çыруçă шуйттан.

Ђиновниксене çавăракан шуйттан.

Çĕр ĕçлекенĕн кӳрши.

Çĕр ĕçлекенĕн арăмĕ.

Марйе—çĕр ĕçлекенĕн хĕрĕ 7-8 çулта.

Çĕр ĕçлекенĕн амăшĕ.

Çĕр ĕçлекенĕн ашшĕпе пĕр тăван пысăк пиђђĕшĕ.

1—мĕш старик.

2—мĕш старик.

3—мĕш старик.

4—мĕш старик.

Карђăксем, ађасем „шуйттан çурисем.

# 1—мӗш пайӗ.

## 1—мӗш стсенӑ.

Ҫӗр ӗҫлекен—(Суха тӑваҭ, ҫӳлелле пӑхса). Кӑнтарла ҫитрӗ те пулас вӑл, тӑварма та йураҭ. Тепӗр прасна кайса ҫаварнам та, тӑварам. Ну праснапа! (Кайса ҫаварнсан). Йураҭ ҫӑкӑр илсе килме астунӑ. Ӗнтӗ киле кайса вӑхӑт иртермесп, пӑртак ҫырткалам та турӑ пулӑшнипе каллех ӗҫе тытӑнам. Ку анана турӑ пулӑшсан пайан пӗтереп-ха.

## 2—мӗш стсенӑ.

Шуйттан ҫури—(Шуйттан ҫури ҫӑкӑр татӑкӗ патне ҕупса тухаҭ). Ытла пит ырӑ-ҫке. Пӗр майах турра асӑнаҭ. Тӑр-ха, шуйттана та асӑнӑн. Вӑрласа кайам ҫӑкӑр сӑмсине. Ҫийес килсен татӑка шырама пуҫлӗ. Хырӑмӗ выҫсан тем каласа та вӑрҫӗ ха, ун ҕухне вара шуйттана та асӑнӗ. (Ҫӑкӑр таткине илсе тӗм хыҫне сухалакан мӗн тӑвассине кӗтсе лараҭ).

Ҫер ӗҫлекен—Ах, пит хырӑм выҫрӗ. Арӑм пысӑк татӑк ҫӑкӑр парса йанӑ-ҕҕӗ, пӗтӗмпех те ҫисе йарӑп. (Сӑхманӗ патне пыраҭ). Ха! ҫӑкӑр ҫук-ҫке.

Сӑхманпа витнӗ пекех астӑвап-ҫке. (Сӑхманне ҫӗклет). Кунта та ҫук-ҫке. Ак ӗнтӗ! Ӑҫта кайрӗ-ши? (Сӑхманне силлет).

Шуйттан ҫури—(Тӗм хыҫӗнҗе) Шыра, акӑ кунта вӑл. (Ҫӑкӑр сӑмси ҫине ларать).

Ҫӗр-ӗҫлекен—(Сӑхманне ҫӗклесе каллах силет) Тӗлӗнмелле! Шӑлт тӗлӗнмелле! Никам та иртсе ҫӳремерӗ-ҫке, ӑҫта сухалҗӗ ку ҫӑкӑр сӑмси? Кайӑк-кӗшӗксем ҫисе кайнӑ пулсан, тӗпренҗӗккисем йулмалла. Тӗпренҗӗк таврашӗ те ҫук-ҫке-ха! Хам асӑрхаймарӑм пулӗ. Кам та пулсан илсе кайрӗ пулмалла.

Шуйттан ҫури — (Тӑрать те ҫӗр-ӗҫлекен йенелле пӑхать). Халех мана асӑнать.

Ҫӗр-ӗҫлекен—Ҫавӑн пек пулмалла пулҗӗ пулҗ. Выҫах вилмӗп-ха. Илсе кайнӑ пулсан, хырӑм выҫнӑ ҫын илсе кайнӑ пулҗ. Ҫитӗрех, сывлӑха пултӑр.

Шуйттан ҫури—(Сурать). Ах пӗтменнӗскер! Вӑрҫас вырӑнне сывлӑха пултӑр, тет. Нимӗнле те ҫы́лӑха кӳртеймӗн. (Ҫынни сывӑрма выртать, сӑх-сӑхать, анаслакалать те сывӑрса кайать. Шуйттан ҫури тӗм хыҫӗнҗен тухать). Акӑ сӑмахла ӗнтӗ пуҫлӑхпа. Вӑл пӑрмайах:—Есӗ тамӑка ҫӗр-ӗҫлекен ҫынсене сахал илсе килетӗн, тет. Хуҫасем, улпутсем, тата ыттисем кашни кунах нумайланаҫҫӗ, ҫӗр-ӗҫлекен анҗах сахал тесе

мана вăрçаť; мĕнле ăна çавăрса сылăха кӳртен? Нимĕн майпа та ăна çаврас çук. Кунтан ытла мĕнле ĕнтĕ? Йулашки çăкăрне çаклатрăм. Çапах та унăн усала асăнас шухăш та пулмарĕ. Мĕн тумаллине ĕнтĕ хам та пĕлместĕп, тем тăвас. Кайам ха пуçлăх патне, каласа парам. (Çухалаť).

*Ѣаршав.*

## 2—мĕш пайĕ.

Т а м ă к—Шуйттансен пуçлăхĕ аслă вырăнта ларат. Çыруçă айалта сĕтел умĕнѣе лараť. Айккисенѣе сыхлавĕçсем тăраççĕ. Сылтăмра 5 тĕрлĕ усал çурисем сулахайра алăк панѣе алăк сыхлавçи; пĕр вĕçкĕн шуйттан çурйĕ асли умĕнѣе тăраť.

В ĕ ç к ĕ н ш у й т т а н—Виçĕ çулта епĕ пурĕ çирĕм икĕ пинте пиппĕк çын тамăка лектертĕм. Халĕ пурте вĕсем ман алăра.

Ш у й т т а н п у ç л ă х ĕ—Пит аван, тавта пуç сана, кай. (Вĕçкĕн шуйттан сылтăмалла иртсе кайаť Пуçлăхĕ çыруçне). Ывăнтăм епĕ. Тата ĕç нумай йулѣĕ и-ха? Камран камран хисĕп илнĕ? Тата камран илмелли йулѣĕ?

Ç ы р у ç ă—(Пӳрнисемпе шутласа пырса, сылтăмра тăракан шуйттансем çине кăтартаť хăшне кăтартаť

çав тайăлат). Улпутсене çавăракан усалтан хисеп илнĕ. Вăл мĕн пурĕ сакăр çĕрте вăтăр ултă сын çавăрса килнĕ. Хуçасене çавăраканнинҕен илнĕ, вăл тăхăр пин те ултçĕр хĕрĕх виçĕ çын илсе килнĕ. Сут йĕркине пăхаканран виçĕ пин те тватçĕр çирĕм виççĕ. Хĕр-арăмсене çавăраканран хисеп илнĕ, унăн çĕр сакăрвун ултă пин те виç-çĕр вунпиллĕк хĕр-арăм, вун çиҕĕ пин те тватçĕр вăтăр сакăр хĕр. Иккĕшĕ анҕах йулнă, ҕинавниксене çавăраканпа хресҕенсене çавăракан! Мĕн пурĕ икçĕр çирĕм пин те пиллĕк çын.

П у ç л ă х—Пайан пĕтерес пулĕ ĕçе. (Алăка астăваканнине). Кӳрт! Ҕиновниксене çавăракан кĕрет. Пуçлăха тайлат). Мĕнле-ха, сан ĕçсем йепле?

Ҕ и н о в н и к с е н е ç а в ă р а к а н—(Кулса, аллисене хуçкаласа). Манăн ĕçсем хăрăм пек шап-шурă, кун пеккине тĕнҕе пулнăранпа та астумастăп.

П у ç л ă х ĕ—Пит нумай çавăртăн-им?

Ҕ и н о в н и к с е н е ç а в ă р а к а н—Шуҕĕпе нумайах мар, пĕр пин те виçĕ çĕр аллă кăна, анҕах аҕисем пит маттуррисем лекрĕç. Хайсем тепрер шуйттантан ирттереççĕ. Усаллисенҕен те лайăхрах çынсене илĕртеççĕ, епĕ вĕсене çĕнĕ йала вĕрентрĕм.

П у ç л ă х ĕ—Мĕнле йала апла?

Ҕ и н о в н и к с е н е ç а в ă р а к а н—Акă мĕнле. Ĕлĕк ҕиновниксем сутпала çынсене ултапанă, халĕ

епӗ вӗсене сутӑесенҫен уйрӑм пулма вӗрентрӗм. Халӗ вӗсем укҫа паракансемшӗн анҫах тӑрӑшаҫҫӗ, ҫав тери тӑрӑшаҫҫӗ ӗҫ ҫук ҫӗрте ӗҫ тӑваҫҫӗ. Усалсенҫен лайӑхрах ҫынсене аташтараҫҫӗ.

П у ҫ л а х ӗ—Иртсе кай! (Ҫиновниксене ҫавӑракан шуйттан сылтӑмалла кайаҭ. Алӑка астӑва каннине). Иулашкине кӳрт ӗнтӗ. (Ҫӗр-ӗҫлекенсене ҫавӑракан шуйттан ҫӑкӑр сӑмсине илсе кӗрет. Ҫӗре ӳксе пуҫҫапаҭ).

Ҫ ӗ р-ӗ ҫ л е к е н с е н е ҫ а в ӑ р а к а н—(Йӗрет). Пӗрре те ҫук?!

П у ҫ л ӑ х ӗ—Мӗн? Пӗрре те ҫук? Мӗнле пӗрре те ҫук?! Мӗн турӑн есӗ? Ӑҫта ҫапкаланса ҫӳрерӗн?

Ҫ ӗ р-ӗ ҫ л е к е н с е н ҫ а в ӑ р а к а н — (Нӑшӑклатса). Ҫапкаланса ҫӳремерӗм епӗ, ҫун тухас пек тӑрӑшрӑм, ҫапах ним тума та пултараймарӑм. Акӑ пӗринне алли айӗнҫенех йулашки ҫӑкӑр сӑмсине вӑрларӑм, ҫапах та нимӗн каласа вӑрҫмарӗ, сывлӑха пултӑр терӗ анҫах.

П у ҫ л ӑ х ӗ—Мӗн?... Мӗн есӗ мӑкӑртататӑн? Сӑмсуна шӑнкар ха! Каласа кӑтарт еретлӗ, сана капла ӑнланмалла та мар.

Ҫ е р-ӗ с л е к е н с е н ҫ а в ӑ р а к а н—Пӗр ҫын суха тӑваҭ-ҫӗ. Пӗлсе тӑратӑп, унӑн пӗр ҫӑкӑр сӑмси

анђах, урӑх ҫимелли те ҫук-ђӗ, хырӑм выҫнипе темскер те пӗр каласа ҫылӑха кӗтӗр тесе, епӗ ҫӑкӑрне вӑрларӑм, анђах вӑрҫас выранне вӑл кам илнӗ ҫав сывлӑхлӑ ҫитӗр терӗ анђах! Епӗ ҫӑкӑр сӑмсине те илсех килтӗм, акӑ вӑл!

Пуҫлӑхӗ—Ну, ыттисем мӗнле?

Ҫер-ӗҫлекенсен ҫаварӑкан—Пурте пӗрех вӗсем, пӗрне те ҫавраймарӑм.

Пуҫлӑхӗ—Мӗнле есӗ пуш алпа ман патна килме хӑйрӑн. Ҫитменнине тата шӑршлӑ ҫӑкӑр сӑмси илсе килнӗ. Есӗ манран кулма шухӑшларӑн-им? Есӗ кунта ахаљ тӑранса пурӑнас тетӗн-и мӗн? Ыттисем ӗҫлеҫҫӗ, тӑранаҫҫӗ. Авӑ вӗсем. (Ыттисем ҫине кӑтартса). Хӑшӗ вуншар пин, тепри икҫӗршер пин илӗртсе килђӗҫ. Есӗ нимӗнсӗрех, пӗр ҫӑкӑр таткипе килнӗ. Ҫитменне сӑмахласа тӑратӑн! Ҫапкаланса ҫеҫ ҫӳретӗн! Ӗҫпени ҫук! Ҫавӑнпа вӗсем иртӗнсе кайнӑ. Тӑр-ха пӑртак, епӗ сана вӗрентӗп.

Ҫӗр-ӗҫлекенсен ҫаварӑкан—Ан ҫаптарах сӑмах калама пар. Вӗсене аван: уллутсемпе-и, хуҫасемпе-и, хӗр-арӑмсемпе-и? Унта паллӑ: улпута ђынпа ҫӗр парап тесен, ҫавӑртӑн та ӑна. Хуҫ те кирек ӑҫта ипсе кай. Хуҫасене те ҫавӑн пекех: укҫа кӑтартсан, кӗвӗҫлӗхпе астарсан-хуҫ вӗренпех йаваласа кай, та-

паланмасть те. Хӗр-арӑмсене те ҫавӑрма ҫӑмӑл: вӗсене тум пултӑр та вӑйӑ-кулӑ пултӑр-вара пӗтрӗ, кирек мӗн ту. Ак ҫӗр-ӗҫлекенне ҫавӑрса пӑх-ха. Вӑл иртен пуҫласа ҫӗрлеҌҌен ырми-канми ӗҫлет. Турра асӑнмасӑр ӗҫе тытӑнмасть. Ун патне йепле пыран? Аттем, мана ҫӗр-ӗҫлекенсенҌен хӑтар, тертлентӗм вӗсемпе епӗ, сана та ҫилентертӗм.

Пуҫлӑхӗ—Улталатӑн кахал! Ыттисем ҫине кӑтартмалли ҫук унта! Вӗсем куҫасене те ҫавӑрма пӗлеҫҫӗ, улпутсене те, арӑмсене те ҫавраҫҫӗ. Майне пӗлеҫҫӗ. Ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ майсем тупаҫҫӗ, ав Ҍиновниксене ҫавракан, мӗн шухӑшласа кӑларнӑ. Есӗ ҫӑкӑр сӑмси вӑрланӑ та, мухтанатӑн. Ҍейелӗх вӑл? Шухӑшла лайӑхрах. Тӗрлӗрен серепесем ларт: хӑшне те пулин лекӗ. Есӗ ку ҫапкаланса ҫӳресе вӗсене иртӗнтерсе йанӑ, ҫавӑнпа вӗсем хӑватлӑланса кайнӑ. Йулашки ҫӑкӑр сӑмсине хӗркенми пулнӑ. Ҫавӑн пек йалана вӗсем вӗренсе кайсан, тата хӗр-арӑмсене вӗрентсен вара пурте аларан вӗҫернеҫҫӗ. Шухӑшла! Хуть те касӑл, анҌах май туп!

Ҫӗр-ӗҫлекенсен ҫавӑракан—Ним шухӑшласа тумпа та пӗлместӗп ӗнтӗ, улӑштар есӗ мана. Тек пултараймастӑп!?

Пуçлăхĕ—(Çилленсе) Пултараймастăн!? Мĕн саншăн ман ĕçлес-им?

Çĕр-ĕçлекенсен çавăракан—Пултараймасп!

Пуçлăхĕ—Пултараймастăн? Тăр-халĕ? Ей! Илсе килĕр-ха хулă, çăптарăр ăна! (Сыхлавçăсем йарса илсеççĕ те çаптараççĕ).

Çĕр-ĕçлекенсен çавăракан-Ай—ай—ай!

Пуçлăхĕ—Май тупрăн-и?

Çĕр-ĕçлекенсен çавăракан—Ай — ай? Тупаймасп!

Пуçлăхĕ—Çапăр хытăрах! (Çапаççĕ). Тупрăн-и?

Çĕр-ĕçлекенсен çавăракан — Тупрăм, тупрăм!

Пуçлăхĕ—Ну, каласа пар, мĕн шухăшласа тупрăн?

Çĕр-ĕçлекенсен çавăракан—Май тупрăм, пурне те хам алла çавăрса илеп. Анçах мĕнле çавăрса илессине халех каласа пама пултараймасп, çĕр-ĕçлекен патне тарçа кĕме анçах ирĕк пар!

Пуçлăхĕ—Ну, йурĕ, асту, есĕ виçĕ çулта çăкăр çимелĕх уса тупаймасан, епĕ сан тирна йăт тирне сӳсе илнĕ пек сӳсе илĕп.

Ç ĕ р-ĕ ç л е к е н с е н ç а в ă р а к а н—Виçĕ султан пурте вĕсем манăн пулаççĕ.

П у ç л ă х ĕ—...Йурĕ. Виçĕ çултан хам пăхма пыратăп.

*Ђаршав.*

## 3—мĕш пайĕ.

### Хампар, тырă лавĕсем тăваççĕ.

### 1—мĕш курăнни.

Ш у й т т а н-т а р ç ă—(Тырра лав çинђен пăталкана тултарат̆, çĕр ĕçлекен илсе кайат̆).

Т а р ç ă—Çиђђĕмĕш!

Ç ĕ р-ĕ ç л е к е н—Миçе пăталка?

Т а р ç и—(Алăк çинђи паллăсене пăхат̆). Çирĕм ултă пăталка çирĕм çиђђĕмĕш.

Ç ĕ р-ĕ ç л е к е н—Пĕтĕмпех кĕмест, тулђĕ ĕнтĕ.

Т а р ç и—Хыçаларах хырса йар-ха!

Ç ĕ р-ĕ ç л е к е н—Хырсан та, кĕмест. (Пăталкине илсе кайат̆(.

### 2—мĕш курăнни.

Т а р ç и—(Пĕђђенех. Калпакне илет, мăйракисем курăнаççĕ). Хуçа хапех килмест ха, мăйракасене пăр-

так тӳрлетеє (Тӳрлетет). Урасене те салтас-ха, ун умĕнҫе йурамасť. (Аттисене хываť те выдҫăх ҫĕрнисем пек ҫĕрнисем курăнаҫҫĕ. Алăк урати ҫине лараť). Акă ĕнтĕ епĕ тарҫа кĕни виҫҫĕмĕш ҫул. Манăн хисеп пама та вăхăт ҫитет. Тырра хума вырăн та ҫук. Йулашки ĕҫе вĕрентмелли анҫах йулҫĕ. Вара хуť пуҫлăх хăй килсе пăхтăр, кăтартмалли пулĕ. Ҫăкăр сăмсишĕн тӳллĕ вара вăл мана. (Кӳршĕ ҫынни).

## 3—мĕш курăнни.

## Тарҫă мăйракисене пытараť.

Кӳршĕ—Сывă-и-ха?

Тарҫă—Сывă-ха!

Куршĕ—Хуҫа ăҫта?

Тарҫă—Пӳлмене тырă кĕреймест те хыҫала купалама кĕҫĕ.

Кӳршĕ—Турă панă-кам хуҫана! Пӳлмесене те кĕреймест-ҫке. Ҫак икĕ ҫултанпа сан хуҫан тырă пулнинҫен йăлт тĕлĕнетпĕр епĕр. Такам ăна каласа параť. Иртнĕ ҫу уйар пулҫĕ-вăл шурлăха акрĕ, ҫынсен пулмарĕ, есĕр пĕтĕм йĕтеме тултартăр. Кăҫал йĕпе ҫул—таҫтан сиснĕ, вăл сăрта акрĕ; ҫынсен тырри ӳксе ҫĕрҫĕ, сирĕн тырă хумăш пек пулҫĕ. Тырри те мĕнле. Шултра, тутă, сунă укҫа пек. (Ывăҫ ҫине илсе тытса пăхаť).

## 4—мĕш курăнăи.

Ç ĕ р-ĕ ç л е к е н—(Пушă пăталкапа тухать). Çÿретре кум?

К у р ш ĕ—Çÿретпĕр-ха, çуретпĕр. Сан тарçăпа сăмахлатпăр-çке-ха. Ăçта аксан тырă пулассине таçтан ђухлатăр есĕр. Пĕтĕм çын сирĕнтен тĕлĕнет. Пулђи сирĕн ике çулта тырă—вунă çулта та çисе йарас çук.

Ç ĕ р-ĕ ç л е к е н—Тавта пуç ак Ваçкана (Тарçине кăтартса). Çавăн телейпе. Иртнĕ çура епĕ ăна сухана йатăм, вăл путсĕр, шурлăха сухаланă хунă, епĕ ăна вăрçатăп, вăл хăй талайах, кăçал шурлăхра ăнать, тет. Акрăмăр—ăнтартăмăр. Кăçал та çаплах: унăн сăмахĕпе сăрта акрăмăр—килĕшрĕ.

К ÿ р ш ĕ—Темле пĕлет, мĕнле çул ăçта акассине... Пуçтартăн-çке ĕнтĕ тырра. (Иккĕшĕ те тĕлĕнесçĕ). Епĕ сан патна кăмăлпа килнĕђђĕ; çĕнĕ тырă пулађђен пĕр пилĕк пăталка ыраш памăн-ши есĕ? Çиме пĕтрĕ. Выçă вилетпĕр.

Ç ĕ р-ĕ ç л е к е н—Йурĕ, парас.

Т а р ç ă—(Хуçине тĕртсе) Ан пар!

Ç ĕ р-ĕ ç л е к е н—Ан тив, илтĕр!

К ÿ р ш ĕ—Тавта пуç сана.

Т а р ç ă—(Айăккинелле пăхса). Ĕлĕкхи йăлана пăрахмасŤ вĕт ха, паратŤ, пур тĕлтен те мана итлеместь. Ђим-ха пама ђарăнĕ. (Кӳрши кайатŤ).

**5—мĕш курăнни.**

Ç ĕ р-ĕ ç л е к е н—(Алăк урати çине ларатŤ). Ыpă сынна мĕншĕн парас мар.

Т а р ç ă—Парассине парăн, йепле кайалла илĕн. Кивçен парасси анаталла анасси, кивçен илеси тăвалла ухасси, теççĕ ваттисем.

Х у ç а—Памин тата, тыpă нумай вĕт.

Т а р ç ă—Нумай пулин.

Х у ç а—Çĕнĕ тыpăђђен мар, тата икĕ виçĕ çулата çитĕ ха. Аçта хуран ăна?

Т а р ç ă—Йепле ăçта? Вырăн тупăп епĕ: сан тыррунтан ĕмĕр савăнмалли йапала туса парăп.

Х у ç а—Мĕн тăвас тен вара есĕ?

Т а р ç ă—Ĕçмелли тăвăп. Çав тĕрлĕ лайăх йапала пулĕ, вăйу пĕтсен вăй кӳртĕ. Хырăму выççан тăрантĕ, ыйăх килмен ђух çывăрттарĕ, хăранă ђух хăйулантарĕ. Çавăн тĕрлĕ ырă йапала пулĕ вăл.

Х у ç а—Пулмĕ.

Т а р ç ă—Пулмĕ тетĕн. Пĕлтĕрпе кăçал тырра ăçта, ăçта аван пулассине калаттăм та, ĕненместĕн

кайран хăвах куртăн: çавăн пекех ĕçмелли çинҫен те пĕлеп.

Х у ç а—Мĕнтен тăвас тетĕн-ка ăна.

Т а р ç ă—Ара сан тыррунтан.

Х у ç а—Çылăх пулмĕ-и?

Т а р ç ă—Каларăн. Мĕншĕн çылăх пултăр. Пур йапалана та пире турă савăнăçлăка парат̆ вĕт.

Х у ç а—Ăçтан есĕ Ваçка çавăн ҫухлĕ ăс тупнă, хуна пăхсан нимех те мар есĕ. Ĕçҫениййĕ ĕçҫен ĕнтĕ икĕ çул хушшинҫе лайăхăн салтăнса выртса курмарăн. Пĕлмен йапала çук сан, йепле вĕрен̂се пĕтернĕ есĕ?

Т а р ç ă—Çўрекен çын вĕренет.

Х у ç а-Ĕçмеллинҫен вăй та хутшăнат̆ тетĕн-и-ха?

Т а р ç ă—Хăвах курăн ăна, ыррине.

Х у ç а—Мĕнле тăвăпăр епĕр ăна?

Т а р ç ă—Ăна тăвасси майне пĕлсен, темех мар: хуран тата пĕр икĕ ҫухăн çеç кирлĕ.

Х у ç а—Тути мĕнле унăн?

Т а р ç ă—Пыл пек. Тутанса пăхсан ĕмĕр те пăрахаймăн.

Х у ç а—Ай-ай! Кайам ха кум патне, унăн хуран пур-ҫĕ, туса пăхсан йурат̆.

*Ҫаршав.*

# 4—мӗш пайӗ.

**Сарай, варринҫе вут ҫинҫе кранлӑ хуран, сӗрсе лартнӑ Хуҫипе тарҫи.**

## 1—м ӗ ш с т с е н а.

Т а р ҫ и—(Стаккана кран айне тытнӑ, ерех ӗҫет). Ну хуҫа, пулҫӗ.

Х у ҫ а—(Лапҫӑнса ларса пӑхат). Ак йапала! Ҫустарӑн шыв йухат. Мӗнле ха ку? Есӗ малтан шывне йухтаратна?

Т а р ҫ ӑ—Шыв мар вӑл, хайхи ӗҫмелли ҫак ӗнтӗ.

Х у ҫ а—Мӗншӗн тӑрӑха вӑл? Епӗ ӑна сӑра пек хӗрлӗ пулӗ тесе шухӑшланӑҫҫӗ. Ку шыв тӗслех!..

Т а р ҫ ӑ—Есӗ шӑршласа пӑх халӗ!

Х у ҫ а—(Шӑршласа). Ах, шӑрши! Ну, ну, парха ӗҫсе пӑхам Ҫӑварта мӗнле вӑл. (Аллинҫен туртса илет).

Т а р ҫ ӑ—Ҫим-ха, тӑкса йаран. (Кранне пӑрат, ӗҫет те ҫӗлхипе ҫуланат) Пулҫӗ, ме, ӗҫ!

Х у ҫ а—(Малтан пӑртак ӗҫет, пӗҫиккӗнех ӗҫсе йарат. Стакканне парса). Тата пар-ха! Сахал ӗҫсе тутине те ҫухлаймарӑм.

Т а р ç ӑ—(Кулса) Килӗштертӗн-и мӗн? (Тата тултарать).

Х у ç а—(Ӗçет). Акӑ йапала! Арӑма ҫӗнсе килес. Ей Мархва, кил-ха! Пулҫӗ! Кил, кил тенӗ!

## 2—мӗш стсенӑ.

### А р ӑ м ӗ, х ӗ р ӗ ç а в с е м е х.

А р ӑ м ӗ—Мӗн пулҫӗ? Мӗн кӑшкӑран?

Х у ç а—Есӗ тутанса пӑх-ха! (Тултарса парать). Малтан шӑршласа пӑх.

А р ӑ м ӗ—Тем курса ларас пулӗ унпала!

Х у ç а—Ӗç, ухмах.

А р ӑ м ӗ—(Ӗçет). Ҫӑнах аван çке!

Х у ç а—(Усӗрлме пуçланӑ). Аван çав. Ҫим-ха, мӗн пулӗ малалла. Ваçка сӑмаххипе вӑл вӑй пӗтнине те таçта йарать. Çамрӑккисене ватӑлтарать, ей аташрӑм! Ваттисене самрӑклатать. Акӑ, епӗ мӗн пурӗ икӗ стаккан анҫах ӗçнӗ, çапах пӗтӗм шӑм-шак тӳрленсе кайрӗ. (Çапкаланать). Куратна?! Тӑр-ха. Епӗр ӑна кашни кун ӗçсен пӗтӗмпех çамрӑкланса кайӑпӑр. Ну, Мархва! (Ыталаса илет).

А р ӑ м ӗ—Кай. Ухмахланнӑ есӗ унпа.

Х у ç а—А! Есӗ Ваçкапа иксӗмӗре, тырра пӗтере-

тĕр тесе вăрçатăн-ха. Епĕр мĕн турăмăр. Е! Кала-ха, аван вĕт?

А р ă м ĕ—Аван пулми вăл, ваттисене çамрăклатакан йапала. Епĕ те çамрăклансах кайрăм-ха ĕнтĕ. Мана та çăмăллатрĕ ку. Йар-ха йура! (Йурлаççĕ).

Х у ç а—Çапла çав. Пурте çамрăкланатпăр, пурте çăмăлланса кайатпăр.

А р ă м ĕ—Аннене ђĕнес-ха. Вăл пĕрехмай тулашса вăрçса парат, ăна та çамрăклантарас. Çăмрăклансан вара çавăрнса кайми.

Х у ç а—(Ӳсĕрĕлнĕ). Ђĕн ха, аннене ђĕн ха. Ей Марйе! Ђуп асламуна кайса ђĕн! Пысăк пиђђуна та килме кала. Атте ђĕнет, те. Антăр кăмака çинђен, мĕн выртат унта. Çамрăклатас хăвăртрах. Ђасрах. Пĕр уру кунта тепри пӳртре пултăр, ђуп. (Хĕрĕ ђупса кайат. (Арăмне). Ну, тепĕр стаккан пархалĕ. (Тарçи тултарса парат, хуçи ĕçет. Ђĕлхерен пуçласа çамрăкланса пырат, мĕн ку, вара алла кайрĕ, халĕ урана çитрĕ. Урасем çамрăклансах кайрĕç. Йепле ĕнтĕ (Ташласа йарат)

А р ă м ĕ—(Ĕçет). Ну, Ваçка, есĕ пултаракан-ђĕ, купăса кала-ха. (Ваçка купăс калат, хуçипе арăмĕ ташлаççĕ).

Т а р ç и—(Стсенă умĕнђе кулса калат, кăтартса

кусĕсене хĕскелет, калама ҍаранаť, лешсем çапах ташлаççĕ). Çăкăр сăмсишĕн тўллен ха мана. Асрĕç çамрăкçем, вĕçернсе кайаймĕç. Пăхтăрах ĕнтĕ пусăх.

## 3—мĕш стсенă.

**Çамрăк сăнлă карҍăкпа ватă шап-шурă** çўçлĕ **старик кĕреççĕ.**

С т а р и к—У х м а х а й е р т ĕ р е м ĕ н? Ç ы н с е м ĕ ç л е ç ç ĕ, в ĕ с е м т а ш а й а н ă.

А р ă м ĕ—(Алă çупса ташлаť). Их! Их! (Йурлаť). Кĕтĕм епĕ çылăха сирĕн умра мĕн тăвас, турă анҍах çылăхсăр.

К а р ҍ ă к—Ах, намăссăр! Йатă пиҍĕ! Вут хутса çунтармалла, ташлама тытăннă.

Х у ç и—Ĕç, анне, ан шарла! Пăх-ха есĕ: мĕн турăмăр епĕр. Ваттисем çамрăкланаççĕ. Акă ĕçсе пăх! (Параť).

К а р ҍ ă к—Шыш тарасара та нумай. (Шăршлаť). Мĕн йарса тултарнă есĕ унта, шăрш перет?

А р ă м ĕ—Ĕç-ха есĕ!

К а р ҍ ă к—(Ас тивсе). Акă ĕнтĕ. Вĕлермест-и ку?

А р ă м ĕ—Ҍĕрĕлсе кайăн, çамрăкланса кайăн.

Карҍăк—Ҍăнах-и? (Ĕçет). Аван-çке. Сăраран та хăватлăрах ку. Пйахам, ĕçсе пăх-ха!

Старик—(Пуçне суллакапаса ларать).

Ҍарçă—Ан тив ăна, акă сана тепĕр стаккан парас. (Тултарса парать).

Карҍăк—Тек ан тултар: çунтарать ку, ĕçме çăмăл та.

Арăмĕ—Ĕç-ха, ĕç! Хăвах шăм-шак тăрăх килнине сисен пулĕ.

Карҍăк—Мĕн пулĕ, ĕçесех пулҍ. (Ĕçет).

Арăмĕ—Урусене çитри-ха?

Карҍăк—Çите те пырать; акă ку тĕлте. Çăмăллатсах йаҍĕ. Тата пар-ха. (Татах ĕçет). Шрă-ă! Çамрăклансах кайрăм.

Хуçи—Паçăрах каларăм вĕт...

Карҍăк—Ех старикĕм çук. Епĕ çамрăк ҍухне мĕнле пулнине халĕ тепĕр хут курнă пулĕҍҍĕ.

Тарçă—(Купăс калать. Хуçипе арăмĕ ташлаççĕ).

Карҍăк—(Варрине тухса) Çапла ташлаççи, епĕ кăтартам ха сире. (Ташлать). Акă мĕнле. Ак тата çапла Ак куна пăхăр, куратри?

Старик—(Хуран патне пырса ерехе тăкать).

Хуçа—(Ăна курса ҍупса пырать), Мĕн турăн есĕ, усал? Çакăн пек ырра тăкатăн. Ах, ват супнă. (Ăна

тёксе йарат айне стаккан лартат). (Пӧтёмпех йухтарса кӑларнӑ.

Старик—Усал вӑл, ырӑ йапала мар. Сана турӑ тырра çиме тата хӑвӑнтан ытлашкине çынсене тӑрантма панӑ, есӗ уна усал ёçкӗ тунӑ, кунтан ырӑ пулмаст. Пӑрах есӗ çак ёçке. Ху та пӧтӗн есӗ кунпа, çынсене те пӗтерӗн ёçмелли тесе шухӑшлатӑн-и есӗ уна. Ку вут вёт, çунтарса йарат ку сана. (Старик хуран айӗнҙен вут илсе тӗкет, ерех çунат. Пурте сехри хӑпнӑ пек хӑраса пӑхса тараççӗ).

*Ҙаршав.*

## 5—мӗш пайӗ.

### 1—мӗш стсенӑ.

Çӗр-ёçлекенӗн пӳрҍӗ. Мӑйракаллӑ, хуреллӗ тарçӑ пӗҙҙенех.

Тарçӑ—Тырӑ нумай, ниçта хума та çук, ерехӗн тутине сисрӗç ёнтӗ, вӑл халӗ каллах йухтарнӑ, пӗр пиҙке тултарса, çынтан пытарса лартнӑ. Çынсене ахаҍ ёçтермӗпӗр, хамӑра кирлисене анҙах ёçтерӗпӗр, пайан епӗ йал куштанӗсене кӳптерме вӗрентӗм-ха, старике килтен пӗр хулӑ памасӑр хӑваласа йама пулӑшҙӗр тесе. Ман пайан вӑхӑҙӗ те çитрӗ ёнтӗ: виçӗ

çул иртрĕ, ĕç пулђĕ. Хамăр пуçлăх пăхма килтĕрех—ăна кăтартма та намăс мар.

## 2—мĕш стсенă

### Пуçлăхĕ çĕр айĕнђен тухаť

Пуçлăхĕ—Пайан ĕнтĕ вăхăт çитрĕ, çăкăр сăмсилĕх усă турăн-и? Епĕ хам килмеллĕх пулнă ђĕ, çынсене çавăртăн-и?

Тарçă—Çавăртăм, ху пăх, халех кунта пуçтарнĕç. Кĕрсе лар кăмакана. Вĕсем мĕн тунине курсан, мана тек вăрçмăн.

Пуçлăхĕ—(Кăмакана кĕрет). Курăпăр.

## 3—мĕш стсенă.

**Хуçипе тăвата старик кĕреççĕ, хыçĕнђен арăмĕ. Сĕтел хушшине лараççĕ.**

1—мĕш старик—Ну, мĕнле ĕçмеллине тата нумай турăн-и?

Тарçă—Кирлĕ таранђен турăмăр, мĕн ахалех ырă йапалана çухатмалла.

2—мĕш старик—Аван пулђĕ-и?

Тарçă—Ĕлĕкхинђен те авантарах.

2—мĕш старик—Ăçта есĕ вĕреннĕ ăна?

Т а р ç и—Çӳрекен çын вӗренет.

3—м ӗ ш  с т а р и к—Çавӑ ӗнтӗ, çӳрекен çынӑн.

Х у ç и—Ӗçӗр-ха. (Арӑмне илсе пырат̆).

А р ӑ м ӗ—(Крахвин̆тан тултарса). Тав сире!

1—м ӗ ш  с т а р и к—(Ӗçет). Сывӑ пулӑр. Ну ӗçкӗ! Пӗтӗм шӑмшак тӑрӑх карӗ. (Пуçлӑхӗ кӑмака çӑварӗнђен тухат̆, тарçи унпа йунашар тӑрат̆.

Т а р ç ӑ—(Пуçлӑхне кӑтартат̆). Пӑх ӗнтӗ! Епӗ арӑма такӑнтарӑп, вӑл ерехе тӑкса йарӗ. Ӗлӗк вӑл йулашки çӑкӑр сӑмсине хӗрхенмерӗ, пӑх, халӗ стаккан ерехшӗн мӗн пулӗ.

Х у ç и—Ну, арӑм, тултарса ђерет çавӑр-ха. Куна Михаља пиђђене пар!

А р ӑ м ӗ—(Тултарса сӗтел патӗнђен иртсе пынӑ ђух тарçӑ такӑнтарат̆ те, лешӗ тӑкса йарат̆), Ай тур çапасшӗ, тӑкса йатӑм. Тем усал тӗртсе йађӗ.

Х у ç а—(Арӑмне). Ах, ђалпаш! Шайттан! Ху кучарне пӗлместӗн, çын çине йаран. Çавӑн пек ырӑ йапалана тӑкатӑн!

А р а м ӗ—Йури мар вӗт епӗ!

Х у ç а—Йури мар мӗн-çке! Тӑрсан ерех тӑкма вӗрентӗп акӑ. (Тарçине). Есӗ те усал, пархатарсӑрскер, мӗн сӗтел панђе йӑваланса çӳретӗн! Кай, шуйт-

тан! (Арăмĕ тултарса ĕçтерет, тарçи кăмака патне пырса пуçлăхне калаŤ).

Т а р ç и—Куртăн-и? Ĕлĕк йулашки çăкăр сăмсине хĕнхенмерĕ, хаљ пĕр стаккан ерехшĕн, арăмне ђутах хĕнесе тăкмарĕ, мана та сан патна, шуйттан патне кай, тесе хăваласа йађĕ.

П у ç л ă х ĕ—Аван, питĕ аван, мухтатăп!

Т а р ç и—Ђим-ха, çурштавне ĕсçе йађђĕр, вара мĕн пулĕ? Халĕ те пит çукаланаççĕ, вара тилĕ пек ђейеленсе кайĕç.

Х у ç и—Мĕнле ха вăл ваттисем, мĕнле манăн ĕçе татса парăн? Пурăнђĕ, пурăнђĕ ман патăмра пысăк пиђђе пăхса пурăнтăм ăна, халĕ вăл пиђђе патне кайнă та кил çуртран хай пайне пиђђене илсе парасшăн. Лайăхрах шутласа пăхăр-ха, сирĕн пекки йалта та урăх çук теççĕ, епĕ сана, Иван, пиђђе тўррех калам: атте аннерен те маларах есĕ маншăн. Михаља пиђђесемпе те мĕн авалтанах çăкăр тăвар çисе пурăннă.

1—м ĕ ш с т а р и к—(Хуçана). Аван çынпа сăмахлама та аван, тăн-пуç таран, санпа та та çаплах сан пеккине урăх тупас та çук!

2—м ĕ ш с т а р и к—Ăслă, йăпăлђăк, кам йуратмĕ сана.

3—мӗш старик—Ҫав тӗрлӗ хӗрхенетӗп вара сана, пайан ҫеҫ арӑмпа сӑмахланӑҔҔӗ-ха.

4—мӗш старик—Тусӑм, Ҕун савни.

Тарҫӑ—(Пуҫлӑхне тӗртсе). Куратна? Пӗтӗмпех суйеҫтереҫҫӗ, хӑйсем уйӑрлса кайсанах пӗр пӗрне ҫийеҫҫӗ. ХаҔ пӑх-ха йепле сӗреҫҫӗ, тилӗ, пек йӑпӑлтатаҫҫӗ, ӗҫкӗ тӑваҭ вӗт ҫавна.

Пуҫлӑхӗ—Аван ку ерех, пит аван, вӗсем каплах ҫуйеҫтерсен пурте пирӗн пулаҫҫӗ.

Тарҫӑ—Ҕим-ха, тепӗр ҫур штавне ӗҫсе йаҔҔӗр, ку ҫеҫ пули-ха?

Арӑмӗ—(Ӗҫтерет). Ӗҫ-ха ӗҫ!

1—мӗш старик — Ҫитмест-и? Тав сана (Ӗҫет). Аван. Санпа ӗҫме те кӑмӑллӑ.

2—мӗш старик—Ӗҫмесен те ӗҫӗн, тав сире! Хуҫапа арӑмне).

3—мӗш старик—Сыв пулар-ха тусӑмсем.

4—мӗш старик—Акӑ ӗнтӗ ерех. Ӗҫ, пурне те тӑватпӑр. Ман ирӗк, ман ирӗкрен тухаймаҫҫӗ.

1—мӗш старик—Сан ирӗкех пулмӗ-ха, ватӑраххисем мӗн калӗҫ

4—мӗш старик—Ватӑраххисен ӑс сахалтарах ҫав! Ҝай! Ӑҫтан килнӗ есӗ кунта!

2—мӗш старик—Мӗн кӑшкӑран ухмах!

3—мĕш старик—Вăл тĕрĕс калаť. Хуçа пире вырăнсăр ĕçтермест вĕт, ăна ĕç туса парас пулаť. Хуçа та есĕ пире пăх, ђис ту, мĕншĕн тесен есĕ мана кирлĕ мар, епĕ сана кирлĕ, есĕ сысна çури.

Хуçи—Есĕ ху сысна, çăварна каран тата, пĕр кўпме анђах пĕлетĕр есĕр.

1—мĕш старик—Мĕн кăшкăратăн есĕ, ак пĕр йанахран парсан.

Хуçи—Камăн вăй çитĕ.

2—мĕш старик—Курман сан пеккине, шуйттана, сăмахламастăп та санпа, пăрахап та кайап.

Хуçа—(Тăраť). Мĕн есĕ йĕрке пăсан?

2—мĕш старик — Йар! Пĕрер йанратса йарсан.

Хуçа—Йамасп. Кайма пултараймастăн есĕ.

2—мĕш старик—Акă пултаратăп. (Çупса йараť).

Хуçа—Вĕлерет! Кравул! Хута кĕрер. (Тăпăлаççĕ).

Пĕрле. { 1—мĕш старик—Есĕ пĕр çавăнпа.
2—мĕш старик—Пурне те пултаратăп.
3—мĕш старик—Тата пар! }

Хуçа—Пар тепĕр çурштав. (Ĕçеççĕ).

Тарçă—(Пуçлăхне). Курани ĕнтĕ? Йепле, каш.

кӑрсем пек пулса кайрӗҫ, пӗр пӗрне туртса ҫурас пек.

Пуҫлӑхӗ—Аван, аван! Мухтатӑп.

Тарҫӑ—Тӑр-ха виҫҫӗмӗшне ӗҫѣӗр, ку мар пулӗ-ха?

*Ѣаршав.*

## 6—мӗш пайӗ.

### 1—мӗш сценӑ.

Урам—Сылтӑмра пӗренесем ҫинѣе карѣӑксем тараҫҫӗ, вӗсен хушшинѣе старик. Варинѣе вӑйӑ. Ташӑ кӗвви каласа ташлаҫҫӗ. Пӳртрен шавлани илтӗнет, ӳсӗрсем кӑшкӑраҫҫӗ. Старик тухса кашкӑрать, ун хыҫӗнѣен хуҫи тухать те старике калла илсе кӗрет.

Старик—Ей мӑнтарӑн сыннисем сылӑха та пӗлмеҫҫӗ. Мӗн кирлӗ-ши кусене. Ҫакӑн пек пурӑнмалла-и? Ахаљ кунсенѣе ӗҫлемелле, праҫник ҫитрӗ кӗлле кайса кил, ҫурт таврашне тӳрлет, выртса кан, килте ҫемйене усӑллӑ йапаласем ҫинѣен сӑмахласа лар, урама тухсан ваттисемпе йал ҫинѣи ӗҫсем ҫинѣен канашла. Ҫамрӑка выљани килӗшет. Акӑ ӗнтӗ выљаҫҫӗ, пӑхма та кӑмӑллӑ, усал туни ҫук. (Пурте кӑшкӑраҫҫӗ). Мӗн ӗнтӗ ку, сынсене аташратаҫҫӗ те, усалсӗне хаваслантараҫҫӗ. Самӑрла урса кайнӑ, ҫавӑнпа ҫапла хӑтланаҫҫӗ.

## 2—мĕш сте̇нӑ.

Пӳртрен ӳсĕрсем кĕрлесе тухаççĕ, вӑйӑ йенелле ıыраççĕ, кӑшкӑраççĕ, хĕрсене йарса илеççĕ.

Хĕрсем—Кай Макçăм пиђђе, мĕн хӑтлана-тӑн есĕ?

Ађасем—Кайас кунтан. Мĕн вӑйӑ йĕрки пул-тӑр кунта (пурте кайаççĕ, стариксемпе ӳсĕрсем анђах йулаççĕ.

Çĕр-ĕçлекен—(Старик патне пырса ӑна ђыш-кине кӑтартат̆). Мĕн, илтĕн-и? Стариксем пĕтĕмпех мана пулмалла турĕç. Акӑ сана, ме, çыртса пӑх. Пĕ-тĕм çурта мана пӳлмалла турĕç, сана нимĕн те çук. Акӑ вĕсенђен хайсенђен ыйт!

Пĕрле, харпӑсах:

1—мĕш старик—Тĕрĕс, епĕ ĕçе тӳр-рипе татса пама пултаратăп.
2—мĕш старик—Тавлашас пулсан епĕ пурне те çĕнтеретĕп, çавӑнпа епĕ хам та сухаллӑ.
3—мĕш старик—Тусăм, ђун савни.
4—мĕш старик—Çӳре кӑмака, çӳре пӳрт̆, хуçа арӑмне выртма çук. Ĕçетпĕр! (Икшерĕн ыталанса стариксем сулланса кайа-ççĕ. Хуçа килнелле кайнӑ ђух такӑнса ӳкет те хай тĕлĕн вӑрçат̆. Старик ытти çынсемпе: —Мĕн лайӑх çынна пĕтерђĕ ерех—тесе кайат̆).

## 3—мĕш стсенă.

Т а р ç ă—Шуйттан пуçлăхĕпе тухаť.

Т а р ç ă—Куртăн-и, ĕнтĕ сыснасем пекех пулђĕç, паçăр кашкăр пек-ђĕ. (Хуçи çинелле кăтартса). Пылђђăк çинђи сысна пек харклатса выртаť.

П у ç л ă х ĕ—Тăрăшрăн. Малтан тилĕ пек, вара кашкăр пек, халĕ ђăнах та сысна пек, ну! Ĕçкĕ! Кала ха, менле есĕ çакăн пек ĕçкĕ турăн. Есĕ ăна тилĕ, кашкăр тата сысна йунĕ йарса турăн-им?

Т а р ç ă—Çук, епĕ ытлашши тырă анђах тултартăм. Вăл çăкăр çити çитми пурăннă ђухне йулашки татăк çăкăрне те хĕрхенмес-ђĕ, халĕ тырă ниçта хурса вырăнаçтарайми пулсан, унăн ăшĕнђи тилĕ йунĕ те, сысна йунĕ те, кашкăр йунĕ те вăранђĕ. Тискер йун уншĕн йаланах пулнă, анђах ĕлĕк ăна астарайман.

П у ç л ă х ĕ—Ну, маттур! Çăкăр сăмси ђул усă турăн. Хаљ ĕнтĕ ерех анђах ĕçтер. Вара вĕсем нийепле те пирĕн аларан хăтлаймĕç, пурте пирĕн пулаççĕ.

*Ђартав.*